**Хĕвел тухса çутатсан…**

Хĕвел тухса çутатсан,
Каçхи тĕттĕм саланать;
Хура халăх тапрансан,
Вăйлă тăшман саланать.
Хура халăх пурнăçĕн
Çуталас кун курăнать,
Чухăн чĕрин хĕлхемĕ
Вăйлă вута çаврăнать.
Пĕр-пĕрине пулăшса,
Ирĕк тума тăрăшса,
Вăрçа тухар, чухăнсем!
Вăйлăланăр, юлташсем!
Мĕнле йывăр пулсан та,
Пирĕн мĕнрен хăрама!
Вилесси-мĕн пулсан та,
Ĕçсем каймĕç харама!
Пит çинчен куççуль типтĕр,
Хуйхă-суйхă салантăр!
Пуянăн кунĕ пĕттĕр,
Чухăн чĕри савăнтăр!

1918

*Тал-Мăрса, Г. Хĕвел тухса çутатсан…: [сăвă] / Г. Тал-Мăрса // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 83.*